N5
2б-40

...пуплёкёнђи сывлăх
...иссариађё

Н. Йевтоккимăв тухтăр

# Йалсенђи сывлăх комиҫҫисен мён ёҫлемелле

Ђăваш кёнеки уйрăмё
Шупашкар 1927

ЂĂВАШ РЕСПУП. СЫВЛĂХ КОМИССАРИАЂĔ

Н. ЙЕВТОККИМĂВ тухтăр

# ЙАЛСЕНЂИ СЫВЛĂХ КОМИҪҪИСЕН МĔН ĔҪЛЕМЕЛЛЕ

---

ЂĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ
Шупашкар — 1926

Типография
„ЧУВАШСКАЯ КНИГА“
Чебоксары, Б.-Советская 6

Чувашлит № 1012 Напеч. 3000 экз.

*Сывлăха сыхлама пĕлмен пирки етем вăхăтсăр вилет.*

*Роçентталъ.*

## УМЕНХИ САМАХ.

Етеме сывлăх кирлине епир пурте пĕлет пĕр. Сывлăх укçаран хаклă, тенĕ ĕлĕкхи ватă çынсем, вăл тĕрĕс сăмах. Ђăнах та, сăмахран каласан, пĕтнĕ куçа тем ђухлĕ укçа пулсан та куракан тума çук, уксах-ђăлах ал-урана укçапа никам сыватни çук, т. ыт. те. Сывлăх ђир пирки пĕтет, ђир пирки етем нађарланса вăйран кайаť. Хресђен ĕçĕ—йăвăр ĕç, йăвăр ĕçе ĕçлеме вăйлă, пиçĕ пулас пулаť. Сывмар çын йăвăр ĕçе ĕçлеме пултараймасť. Хресђеншĕн сывлăх питĕ кирлĕ, çавăнпа хресђенĕн те сывлăха хака хума, упрама пĕлес пулаť. Сывă çын анђах хăйĕн ўсĕмлĕ ĕçĕпе пурăнăçне малалла йараť, сывмар çыннăн пурăнăçĕ йапăхса пыраť. Сывмар çыннăн пурăнăçĕ çапла йапăхнине есир хăвăр та курнă пулĕ, çемйере пурте сывлăхлă, вăйлă çынсем пулса пурăнăçа йусаса пынине те есир пĕлетĕр.

Пирĕн ђăваш хушшинђе тĕрлĕ ђир-ђĕр нумайши? Пирĕн ђăваш хăйĕн ĕмĕрне пĕр ђирлемесĕр ирттерейетши? Çук! Епир ку

йенҫен мухтанма пултараймастпăр. Пирĕн хушăра ҫирсем питĕ нумай, пуринҫен ытла куҫ ҫирĕ пире ҫĕнтерсе пăрахма тытăннă; ытти ҫирсем те сахал мар. Ҫăвашсенҫен ватăллиҫҫенех сывă куҫлă пулаканни питĕ сайра, вăй-питти ҫынсем хупланса ҫӳрени те сахал мар. Пăсăк куҫ пирки ҫăвашăн мĕн ҫухлĕ тăвас ĕҫĕ йулмасҭши? Куҫ ҫирĕ пирки кун ҫутине курмасăр йĕрсе-макăрса пурăнакансене кам шутласа тухĕши? Акă мĕн пур Ҫăваш совеҫĕсен 1 (6)-мĕш сйесĕнҫе Преннĕккăв йулташ каланă сăмахсене аса илерха. Преннĕккăв й. траххом ҫирĕ пирки телейсĕре йулнисенҫен пĕри—вăл ҫак ҫăваш инкекĕ пирки сĕм суккăр пулнă. Сйес умне тухса Преннĕккăв йулташ ак ҫапла сăмах тытрĕ: Йулташсем! Есир мана пур те куратăр пулĕ, епĕ сире пĕрне те курмастăп. Епĕ ҫак ҫаплă Сйес умне тухса курăнма тивĕҫлĕ ҫын та мар, ҫĕрем ҫуннăран анҫах сирĕн ума тухса калатăп. Етем мĕн ыратни ҫинҫен калаҫаҭ, епĕ те куҫсăр ҫыннăн пурăнăҫĕ ҫинҫен каласа парас тетĕп. Йулташсем! Маншăн ҫутҫанталăк хупланса ларни темиҫе ҫул ĕнтĕ, темиҫе ҫул ĕнтĕ епĕ кун ҫутине курмасăр пурăнатăп,

çӳлти хĕвел çутатса тăракан çутă кун та манщăн кĕрхи кас пекех тĕттĕм. Етем хăй умĕнђе ĕмĕт тытса пурăнат, манăн ĕмĕтĕм те çук, пулас кун-çул та кĕрхи кас пекех тĕттĕм. Епĕ çын вĕçне йулнă çын, сĕтел çине хунă çăкăр татăкне те ыйтса илмелле, парсан çиййĕн, памасан вăл та пулмĕ. Пуç ĕçлет, алă-ура тĕрĕс, пăхсан ђăн çын пек, анђах ӳтпӳ çутăсăр нимĕн те тăваймаст. Çынсем тул çутăлсан ĕçе кайаççĕ, епир суккăрсем, харам пырсем, киле тăрса йулатпăр...

Çапла трахxом йерсе куççăр пулнă çын каланине пĕтĕм сйес пĕр сăмах уçмасăр итлесе илђĕ, пур те шăп пулђĕç.

Халăх куç ђирĕпе анђах пăсăлмаст, ытти ђирсемпе те нумай пăсăлат. Ытти ђирсенђен халăха пуринђен ытла туперккуљос (ђаххоткă) пĕтерет. Туперккуљоспа ђирлекен халăх хушшинђе пит нумай: ӳссе çитнĕ çынсем тăватă çынтан пĕри тенĕ пек туперккуљос ђирĕпе хĕн кураççĕ. Туперккуљос йулашки çулсенђе, вăрçăсем пулса халăх нађарланса çитнĕ пирки, пит сарăлса кайнă.

Халăх хушшинђе тата венерĕк ђирĕсем нумай: вăл ђирсем вăрçă ђухне салтаксем тĕрлĕ çĕрте тупса килнипе сарăлнă.

Траххомпа туперккуђос ђирĕ, тата венерĕк ђирĕсем вăрăма кайакан ђирсем пулаççĕ. Ђирсем тата хăвăрт пулса иртекеннисем пулаççĕ. Вĕсем ак çаксем: халер, тĕрлĕрен тар ђирĕсем, йунлă варвитти, ђеђек (ђеђђе), хĕрлĕхен, скарлаттин, тифтерит, ерисиппел (рошă) т. ыт. те.

Халђ каланă пек ђирсем—йерекен ђирсем пулаççĕ. Вĕсем пуринђен ытла халăх йалсемпе хуласенђе пĕрле кĕпĕрленсе пурăннă çĕрте йереççĕ. Каллех тата йалпа йал та, хулапа хула та пĕр пек мар. Хăш йал, хăш хула тасарах пурăнаť—ун пек йалсемпе хуласенђе ђирсем те сахалтарах. Таса пурăнман йалсемпе хуласенђе ђирсем те ытларах. Хĕлле путексене пăрусене кил-йышĕпе пĕрле пÿртре усраççĕ. Вĕсенђен пÿртри сывлăш пăсăлаť.

Йалсенђе мăшкăлтăк шывсене, тĕрлĕ çÿпĕ-çапăсене карташнех, тепĕр ђух пăлтăр (пÿртекÿ) патнех тăкаççĕ, тислĕк куписем те çурт таврашĕнђех çĕрсе выртаççĕ. Вĕсенђен пÿрте шăршă кĕрсе тăраť, ун пек çĕрте шăнасем те пит хунаççĕ.

Карташĕнђе пусă (çăл) пулсассăн, унта пылђăк пулаť. Пусă пурисене питĕ тумаççĕ,

пусă таврашне çĕр купаласа сăртлантармаççĕ‘ çавăнпа çăмăр шывĕ те, тĕрлĕ тасамарсем те, пусă таврашне пухăнса, ĕçекен шыва кайаççĕ. Тепĕр йалсенҔе çăлсене те таса тытмаççĕ. Çăлсене витсе, шывне вăлашка тăрăх йухмалла туман, ăсма пыракан харпăр хăй витрипе Ҕиксе ăсаҭ. Кун хута çавăн пек çăла тем тĕслĕ витре те пырса кĕрет пулĕ!

Хăшхăш çĕрте çырма шывне йе кўлĕ шывне ĕçсе пурăнаççĕ. Йухан шыв тасарах пулаҭ, ăна ĕçнĕшĕн пĕр сăмах: çырмана пĕвелесен, йухан шыв та тасамарланаҭ. Çу кунĕнҔе пĕвере те, кўлĕре те шыва кĕреççĕ, выљăхсене кўртеççĕ, кĕпейĕм те çавăнтах çăваççĕ—çавăн пек шыва та ĕçекенсем пур.

Хăш йалта вилнĕ выљăхсене выљăх масарне (çăвине) кăна пытармаççĕ—выљăх масарĕ те çук,—ăçта пулнă унта пăрахаççĕ. Çапла выљăх вилисене пĕлсе тирпейлеме пĕлмен пирки, çĕпĕр Ҕирĕпе ытти сикекен Ҕирсем сарăлма пултараççĕ.

Тухтăрсем Ҕирлĕ çынсене емеллеççĕ, Ҕир мĕнрен пулнине кала-кала параççĕ. АнҔах, тухтăрсем кăна халăх сывлăхĕшĕн тăрăшни сахал, халăхăн хăйĕн ку ĕçе çыпăçас пулаҭ.

Тухтăрсем вĕрентсе каланисене ĕçе кўртсе пыма кашни йалтах сывлăх (санитари) комиççи суйлас пулаť. Çак сывлăх комиççисем урлă халăх нумай ĕç тума пултараť, вĕсем кашни йалтах кирлĕ. Сывлăх комиççи мĕн иккенне, ăна йепле пуçласа йамаллине, вăл мĕн ĕçлесе халăха мĕн усă кўме пултарнине кашни хресђенĕн питĕ лайăх пĕлсе тăмалла.

* * *

Ку кĕнекене Соловйов сывлăх комиççисем ваљљи çырни тăрăх, тата санитари йĕркипе тунă тĕрлĕ йышăнусем кăтартусем, инструкцисем тăрăх çырнă.

**Çыраканни.**

1926 çул, çурла уйăхин 18-мĕш кунĕ.

## Мĕн вăл сывлăх (саниттари) комиççи?

Саниттари тени ђăваш сăмахĕ мар, вырăс самахĕ те мар, вăл sanitas-санитас текен латтын сăмахĕнђен пулнăскер. Санитас тени сывлăх тени пулаť, çавăнпа саниттари комиççи тес вырăнне епир **сывлăх комиççи тейĕпĕр**. Çак комиççи халăх сывлăхĕшĕн тăрăшакан комиççи, вăл ђирсемпе кĕрешет. Çынсене емеллесе ђирсемпе тухтăрсем те кĕрешеççĕ, сывлăх комиççи ђире емеллеме пултараймасť; емелпе ĕçлесси—тухтăр ĕçĕ. Сывлăх комиççи урăх йенђен халăха пысăк усă пама пултараť: вăл халăх хушшинђе ђирђĕр мĕншĕн сарăлнине шыраса тупса, пурăнăçри тĕрлĕ çитменлĕхсене пĕтерме тăрăшаť.

Сăмахран калăпăр: акă йалти çынсем усал шыв ĕçсе ђире кайаççĕ, варвиттипе, ăш ыратнипе аптăрама тытăнаççĕ. Варвитти ђирне емеллесси сывлăх комиççин ĕçĕ мар, ђирлисене тухтăрсем емеллеççĕ. Сывлăх комиççин ĕçекен шыва йепле те пулсан аванлатма тăрăшас пулаť, йе урăх таса шыв шырама тăрăшмалла.

Халӑх кӑрђанкӑпа, тата тасамарлӑхран килекен тӗрлӗ ђирпе аптӑрать пулсассӑн, сывлӑх комиççин халӑх мунђи лартма шухӑшлас пулать.

Пасарсенђе, йе сутуилӳ лавккисенђе тасамар çимӗç таврашсем сутаççӗ пулсассӑн, сывлӑх комиççин кунта та санитари йӗркине ӗçе кӳртме тӑрӑшас пулать.

Тата калӑпӑр. Акӑ йалта сикекен (çыпӑçакан) ђир сарӑлма тытӑнать. Ђир ан сарӑлтӑр тесе сывлӑх комиççин ун ђухне питӗ хытӑ ӗçлемелле: ђи малтан тухтӑра пӗлтерес пулать, сыввисене ђиртен сыхланма вӗрентес пулать ђирлӗсене пулђнитсӑна хӑвӑртрах леçме тӑрӑшмалла.

Йалта сывлӑх комиççин ӗçӗ нумай пулмалла, ун ӗçӗ çинђен тӗплӗрех епир кайран калӑпӑр. Халӗ йалсенђи сывлӑх комиççисен ӗçӗсене йепле пуçласа йамалли çинђен, вӑл комиççисене кама суйламалли çинђен пӗр-ик сӑмах калар.

## Йалсенђе сывлӑх комиççисен ӗçне йепле пуçласа йамалла.

Сывлӑх комиççи кашни йалтах пулмалла. Сапалансаларакан пысӑк йалсене пайласа

(уђђасткă туса), кашни уђђасткăра ăрасна пĕрер комиççи суйлас пулаť. Тепĕр йенђен—йалсем ытла вĕтĕ пулсассăн, пĕр-ик-виç йала пĕр комиççи суйласан та йураť.

Сывлăх комиççин ђленĕсене йал пухăвĕнђе суйламалла. Миçе çын суйламаллине вулăсри сывлăх канашĕ кăтартса параť. Сывлăх комиççине пысăк йалсенђе нумайтарах ђленсем кўртес пулаť, пĕђĕк йалсенђе сахалтарах кўртсен те йураť, çапах та 3 çынран кайа суйлас пулмасť, пысăк йалсенђе 10 çынран ытла кирлĕ мар.

Сывлăх комиççине йал совеђĕпе пĕр вăхăтра суйласан авантарах пулмалла, мĕншĕн тесен, йал совеђĕн ђленĕсем те, сывлăх комиççин ђленĕсем те пĕр вăхăта суйланаççĕ. Сывлăх комиççине суйласси пĕђĕк ĕç мар: ăна питĕ пĕлсе тăвас пулаť, ку ĕçе пĕлсе тусан тин сывлăх комиççи лайăх, ўсĕмлĕ ĕçлĕ тесе шанма пулĕ.

Сывлăх комиççине кĕмелли кăнтитатсене йал канашĕ йалти ытти пĕрлешўсемпе пĕрле (пулăшу комиттеђĕ, хĕрарăм пайĕ, комсомол) кăтартса параť. Халăха усă кўме пултаракан

çынсене анҫах суйлама тăрăшас пулаť—ĕç-леме ўркенмен, çырăва пĕлекен çынсене, сывлăх ыйтуне тăнланакан çынсене суйлама тăрăшмалла.

Пухура суйланă ҫленсенҫен пуçне сывлăх комиççине тата комсомолтан, пулăшу комит-тетĕнҫен, хĕрарăм пайĕнҫен пĕрер çын, тата йал канашин ҫленĕсенҫен пĕрне кўртес пулаť. Çывăхри тухтăр суйламасăрах сывлăх комиç-çине кĕрет.

Сывлăх комиççине ҫи пирвай суйланă ҫух вăл мĕн ĕçлесе, мĕн усă кўме пултарни çинҫен малтан халăха токлат туса памалла. Çак токлата тума çывăхри тухтăра ҫĕнсен усăллăрах пулмалла. Апла тума май килмесен, комиççине кĕрекенсенҫен пĕри кĕскен те пулсан халăха тăнлантарса парĕ. Токлатĕнҫе йалти санитари çитменлĕхсене кăтартса памалла (пўрт ăшҫиккине тасамар тытни, халăх мунҫи çукки, куç ҫирĕ ҫăваш хуш-шинҫе мĕншĕн сарăлни, пусăкарташ таврашне ирсĕр тытни т. ыт. те), халăх сывмарлăхĕ çак çитменлĕхсенҫен килнине пĕлтерсе парас пулаť; унтан çак çитменлĕхсене пĕтерес ĕçре

сывлăх комиççи усă пама пултарасси çинђен тĕплĕрех каласа пама кирлĕ.

Сывлăх комиççине ĕçлес текен шанђăклă çынсене суйламалла, суклаçи памасăр вĕсене суйлас пулмасť. Унта çĕр ĕçлесе пурăнакан йалти çынсене çеç суйлама тăрăшмалла мар— уђђитлĕсене, акрономсене, хресђене çывăх интелликентсене те манас пулмасť, вĕсем ку ĕçре усăллă çынсем пулма пултараççĕ— вĕсем саниттари йĕркине пĕлерех параççĕ.

Сывлăх комиççин ђленĕсене пухура суйлани çинђен **проттокол çырмалла, проттоколăн коппине вара йалсовеђĕ уйесри сывлăх пайĕпе вулăсри ĕçтăвкома йарať. Вулăсри ĕçтăвком йал пухăвин проттоколне çирĕплетсен, сывлăх комиççи хăйĕн ĕçне пуçласа йама пултарať.**

## Сывлăх комиççин малтанхи ĕçĕ.

Сывлăх комиççи пирвайхи ларăвĕнђе преçитиумне суйлať. Преçитиумра виçĕ çын пулмалла: претçетаттĕл, унăн йулташĕ, тата утвитлĕ çыруçă (çекреттар). Преçитиума кĕменнисем сывлăх комиççин ђленĕсем пулаççĕ.

Хуť мĕнле пĕрлешӳре те, преçитиум мĕн пур ĕçе туса, пĕрлешĕве йертсе пыраť; çавăнпа преçитиума пĕлекентерех çынсене кӳртес пулаť. Сывлăх комиççин преçитиумне йал канаш ђленĕсенђен пĕрне кӳртсен авантарах пулмалла. Çапла тусан, сывлăх комиççи йалти ытти пĕрлешӳсемпе çыхăнса тăрса, ĕçе ӳсĕмлĕрех ĕçлеме пултараť. Преçитиума тухтăр ĕçне вĕреннĕ çынсене (тухтăрсене, хвершăлсене, стутентсене) кӳртсен авантарах пулмалла—вĕсем саниттари йĕркине пĕлерех параççĕ.

Йалсенђе ытти ĕçе вĕреннĕ çынсем те пулаççĕ—уђђитлĕсем, акрономсем, копператтăрсем, салтакра хвершăл пулнисем т. ы. те. Сывлăх комиççин преçитиумне суйланă ђух вĕсене те манас пулмасť. Тепĕре каласан—çырăва пĕлерех паракан йалти çынсемех—Хĕрлĕ çарта пулнисем, халăх çинђе урăх ĕç ĕçлесе курнисем, сывлăх комиççин преçитиумĕнђе ӳсĕмлĕ ĕçлеме пултараççĕ.

Совет влаçĕ йалсенђе сывлăх комиççисем тумалли çинђен, вĕсем мĕн ĕçлемелли çинђен ăрасна йышăнусем тунă, вĕсене уйесри сывлăх пайĕнђен, йе вулăсри сывлăх канашĕнђен

илме пулаҭ. Ҫак йышӑнусемпе сывлӑх комиҫҫин пирвайхи ларӑвёнҕех паллашас пулаҭ.

### Йалсенҕи сывлӑх комиҫҫисен ирёкё.

Сывлӑх комиҫҫи йал канашё ҫумёнҕи пёрлешӳ пулса тӑраҭ, йал канашё ӑна кирлё вӑхӑтра пулӑшма пултараҭ. Халё Совет влаҫё санитари ыйтуне тытас йёркепе тёрлё йышӑнусем тунӑ. Сывлӑх комиҫҫи ҫак йышӑнусене ёҫе кӳртме тӑрӑшаҭ. Ҫак йышӑнусене пёрлешӳсем те, ахаҕ ҫынсем те пӑсма пултараймаҫҫё. Санитари йёркине пӑсакансене сывлӑх комиҫҫи милитси урлӑ, йе уйесри сывлӑх пайё урлӑ сут умне тӑратма пултараҭ.

Йалти сывлӑх комиҫҫи хӑйён ҕленёсене вулӑсри сывлӑх канашёнҕе ёҫ тунӑ ҫёре йараҭ, ҫывӑхри пуҕнитсара йал ҫитменлёхёсем ҫинҕен канашлу пулсассӑн, унта та йараҭ.

Сывлӑх комиҫҫин ҕленёсем пур ҫёрте те санитари йёркине ёҫе кӳртме тӑрӑшмалла. Вёсем санитари йёркине сӑнама пурӑнакан пӳртсене (кӑнтӑрла), тёрлё уҕрештенисене (ёҫ вӑхӑтёнҕе) кёме пултараҫҫё, санитари йёркине пӑсакансене сут умне тӑратаҫҫё. Ку ёҫе

сывлăх комиççин пĕр ђленĕ çеç тума пултараймасť, ăна сывлăх комиççи пурĕшпе тумалла. Сывлăх комиççи ђленĕсен кашнин вăл кам иккенне, Совет влаçĕ ăна мĕнле ирĕк панине, тата вăл мĕн тума пултарнине кăтартакан ĕнентерӳ (хут) пулас пулаť. Çак ĕнентерӳве вулăсри ĕçтăвком çырса параť.

**Сывлăх комиççин мĕн пур ĕçне харăсах тытăнмалла мар.**

Сывлăх комиççи ĕçлеме пуçлађђен мĕнле ĕçе ђи малтан, мĕнле ĕçе кайарах тумаллине паллă туса хураť, урăхла каласан—ĕç йĕрки (план) тăваť Тĕрлĕ комиççин ĕç йĕрки тĕрлĕ пулма пултараť, мĕншĕн тесен, пĕр йалта пĕр ĕçе маларах тумалла, тепĕр йалта—тепĕр ĕçе маларах тумалла. Акă сăмахран калăпăр—йалта пусăсем йĕркесĕр пулсассăн, йалти çынсем усал шыв ĕçсе ђирлеççĕ пулсассăн, ђи первай пусăсене йусама, йе урăх майпа йепле те пулсан таса шыв тупма тăрăшас пулаť. Тата, калăпăр - йалта трахком ђирĕ пит сарăлнă пулсассăн, сывлăх комиççин çак ђăваш инкекне пĕтерме çул шырас пулаť, т. ы. те. Пуç-

ламăшĕнђех сасартăк нумай ĕçе тытăнас пулмасť. Сахал ĕçе тĕплĕрех туни нумай ĕç хут çине кăна çырăнса йулнинђен авантарах. Йалсенђи сывлăх комиççи ђи малтан тумалли ĕçсем ак çаксем: 1) тасамар вырăнсене тасаттарассипе, сикекен ђирсемпе кĕрешесси, 2) ĕçекен шыва аванлатасси, 3) халăха саниттари йенђен çутта кăларасси. Ку ĕçсем—питĕ пысăк ĕçсем, вĕсене ђасах туса пăрахма çук, çапах та сывлăх комиççи кунта халăха пысăк усă пама пултараť. Сывлăх комиççи ĕçе майлаштарса пынă майĕпе, унăн çĕнĕрен çĕнĕ ĕçсем тухса пыраççĕ: çамрăк ађапа амăшин сывлăхне сыхласси, шкул ађисен сывлăхне сыхласси, т. ы. те.

Йалсенђи сывлăх комиççисен ĕçне вулăсри сывлăх канашĕ йертсе пыраť, çак канашпа сывлăх комиççин пĕр майах çыхăнса тăмалла, кирлĕ вăхăтра унтан пулăшу та ыйтмалла. Йал канашĕ те сывлăх комиççине нумай пулăшу пама пултараť. Пуринђен ытла йалсенђи сывлăх комиççисем çывăхри пуљниtсари тухтăрпа тађăрах çыхăнса ĕçлес пулаť. Сывлăх комиççин пуљнитсă ĕçне те йавăнмалла.

Халĕ пирĕн пуђнитсасенђе çитменлĕхсем çук темелле мар, унта тĕрлĕ çитменлĕхсем пур. Çав çитменлĕхсене пĕтерме тухтăрсене сывлăх комиççи пулăшма пултарaт̆. Тепĕр йенђен, сывлăх комиççисен ĕçне санитари йĕркине пĕлекен тухтăрсене, хвершăлсене йавăçтарсассăн, сывлăх комиççин ĕçĕ ăраснах кал-кал кайма пултарaт̆.

Халĕ епир сывлăх комиççисене йепле пуçласа йамалли çинђен каларăмăр, малалла йалсенђе вăл мĕн ĕçлемелли çинђен тĕплĕрех каласа парăпăр.

## Сывлăх комиççисем йалти тасамарлăхпа кĕрешмелле.

Тасалăх пире мĕншĕн кирлĕ?

Пирĕн ђăваш халăхĕ ытла тасамар пурăнат̆, çурт-йĕре йĕркелĕ тытма мар, нумайĕшĕ ўтне-тирне те таса усрамаççĕ. Ђас-ђас мунђа кĕмеççĕ, кĕрсессĕн те йалсенђи мунђаран тасалса тухма майĕ сахал. Йал мунђи йаланах тĕттĕм, пĕђĕккĕ пулат̆, çăвăнма вĕри шыв çителĕклĕ мар. Ђăх йăви пек мунђара пĕр вăхăтра темиçе çемйе тĕркĕшнĕ ђух ўт-тире

йепле тивĕçлĕ тасатмалла? Йалти çын ирсерен питне-куçне лăппи-лаппи çеç çукалаŤ, апат умне алăсене тасатса ларас йăла çук; урасене çуса тасатса пурăнасси çинђен асăнмаççĕ те, шăл-çăвара таса тытасси çинђен те çавнах каламалла.

Ђир тени тасамар çĕртре çуралаŤ, таса пурăнма пĕлмен пирки етем хăйĕн хаклă мулне, сывлăхне, çухатаŤ. Çакна епир астуса пурăнмастпăр, тепре каласан, пĕлместпĕр те. Çĕр çинђи ђĕрĕ ђун хăйĕн ĕмĕрĕ тăрăшне пурăнмаллах, етем тесен ватăлиђђенех пурăнмалла, анђах пирĕн хушăра ватăлса çитсе вилекен çын çукпа пĕрех. Етем вăхăтсăр вилни хăйсенђен килет.

Çипуça таса тытманнипе етем пыйтланса кайаŤ. Пыйтă çыртса кансĕрленипе анђах мар, пыйтă пирки ђирсем те пулаççĕ. Акă тиф ђирĕсене илер, вĕсем сывмар çынтан сывă çынна пыйтăпа куçаççĕ. Таса мар ўттире тата кăрђанкă (кĕçĕ) йерет, ку ђир те ђăвашсен хушшинђе питĕ нумай. Таса тытман пирки пўрт ăшђикинђе йĕрĕ çук таракансем хунаса кайаççĕ, тултан шăнасем кĕреççĕ—вĕсем те ђир сараççĕ.

Таса тытман пирки пӳртри сывлăш та йăвăрланаҭ. Епир сывлăшсăр пурăнайманнине пурте пĕлетпĕр, таса сывлăш кирлине пурте пĕлмеççĕ. Тасамар пӳртре пуç ыратаҭ, ыйхине канлĕ çывăраймасҭ, çакăн пек çын тĕсрен кайаҭ, ђаххоткă ђирĕ те тасамар пӳртре хăвăртрах йерет. Тасамар сывлăш пуринђен ытла çамрăк ађасемшĕн сийенлĕ. Вĕсем имшер, хыткан ӳсни, ђас ураланаймасăр асапланни пӳртре сывлăш таса мар пулнинђенех килет темелле.

Пӳрт тулашне, карташсене тасамар тытни те сывлăха нумай сийен кӳрет. Карташ тасамар пулсассăн, тусан-пылђăк пӳрте кĕрсе тăраҭ, тĕрлĕ шăрши-марши те çавăнтах пыраҭ. Карташра таса пулмасан выђăхсем те нумай сийен кураççĕ. Килçурт таврашне таса тытмасан, тислĕксем, çӳпçапсем, мăшкăлтăк шывсем тăпра вигĕр пусă шывне кайаҭ, тата çăмăр шывĕпе çырмана кайса çырмари шыва ирсĕрлет.

Йалсенђе халăх çурђĕсене, уђрештенисене, сутуилӳ тăвакан вырăнсене таса тытмаççĕ. Акă иртен-çӳренсем кĕрсе выртакан çурта, йе апат çитерекен пӳрге илер. Вĕсен тавра-

шĕнҫе кухҫӑ йулашкисене, мăшкăлтăк шывĕсене, çӳпçапсене тухса тăкаççĕ, патне пыма çук: сахвут шăрши сăмсана çапаť.

Йалсенҫе ҫей-апат ĕçтерсе çитерекен пӳрте пырса кĕрсен, такăнса ӳкмелле пылҫăк хыттисем, сывлама çук ҫĕлĕм туртса тултарнă. Сĕтелисем тасамар, çиттисем хытса сăранланса кайнă, йĕри тавра пĕлĕт пек шăна.

Йалти шкулсенҫе, вуламалли çуртсенҫе тасалăх çителĕклĕ мар-унта урайсене тăтăш çумаççĕ, çывăхĕнҫе тула тухмалли ăрасна сахвут пулмасť, сурҫăк сурма савăт лартмаççĕ.

Йалсенҫе саниттари çитменлĕхĕсем питĕ нумай. Пирĕн ҫăваш таса пурăнма вĕренмен, вăл авалтанпа çапла тасамар, тĕттĕм пӳртре пурăнаť, вăл пусмăр ĕмĕрĕсенҫе авалтанпах наукка çуттине курмасăр йаланах çитменлĕхпе, хĕсĕкре, йурлă пурăннă. Йурлă пурăнăçра тасалăх тытма йывăр та, çапах, сывлăха хака хума пĕлсен, пылҫăк айĕнҫен тухма пулаť. Совет влаçĕ пулнăранпа 8—9 çул хушшинҫе епĕр наукка çулĕпе ҫилай малалла утрăмăр, ҫăваш çамрăкĕсем пикенсе вĕренме

тытăнђĕç, ђăваш хĕрĕсем те вĕренеççĕ, çапах та ђăваш пўрђин ĕлĕкхи сăнĕ ўкменха – вăл ĕлĕкхи пекех тĕттĕм, тасамар, унта ĕлĕкхи пекех йăвăр сывлăш, вăл ĕлĕкхи пекех ђир йăви пулса тăрать. Йалсенђе тасалăхшăн ĕçлесси сывлăх комиççисен ђи пирвай тумалли ђи пысăк ĕçĕ пулмалла. Сывлăх комиççи çак ĕçе виçĕ пайа уйăрма пултарать: 1) халăх çурђĕсенђе тасалăх тытасси, 2) килçурт таврашне таса тытасси, 3) унтан çипуçа таса тытасси. Çаксем çинђен халĕ ăрасна тĕплĕрех каласа парар.

### Халăх пўрђĕсенђи тасалăхшăн йепле ĕçлемелле.

Халăх пўрђĕсенђе—шкулсенђе, вуламалли пўртсенђе, театтăрсенђе тасалăх пулни пит те кирлĕ, вĕсем тасалăха вĕренмелли çуртсем пулмалла, çавăнпа йалсенђи сывлăх комиççисем çак тасалăха вĕренмелли çуртсем çине ђи первай ђĕрĕ куçпа пăхас пулать. Халăх çуртсене пуринђен ытла йашкĕрĕм çўрет, çамрăксене пирĕн тасалăха вĕрентмелле; йал çамрăкĕсем те авалхи йăласемпе пурăнма

пуçласассăн, епир авалхи пылђăкран, авалхи ђирђěртен хăтăлаймăпăр.

Халăх çурђěсем вађђи саниттари йěркипе пурăнма сывлăх комиççин йěркелěхсем (кăтартусем) туса парас пулаť. Çак йěркелěхсене сывлăх комиççи хăйěссěн тума пултараймасť, кунта саниттари ыйтусене тěплěрех ăнланакансем кирлě, çавăнпа кун пек ěç тунă çěре çывăхри тухтăра ђěнсе килес пулаť. Халăх çурђěсем вађђи тунă йěркелěхре çуртсен е пыракансене мěн тума йураманнине лайăхрах кăтартса парас пулаť. Сăмахран калăпăр: халăх çуртне пылђăклă урасемпе, кěрěк- сăкманпа кěме йураманнине, тата кěрсен урайне сурђăк сурса варлама, ђěлěм туртса тěтěм тултарма; йураманнине т. ы. те. Халăх çуртне кěнě çěрте алăк уменђе урасене хырса тасатса хăварма хырђăкпа ашăк татăкě пулас пулаť çийелти тумтире хывса хăварма алăкран кěрсенех тумтир çеклисем пулмалла; шалта сурмалли савăтсем пулмалла. Халăх çурђě çывăхěнђе сахвутсене йепле туса, йепле таса усрамаллисене кăтартса памалла, т. ы. те.

Шкулсем, вуламалли çуртсем, театтăрсем çак каланă йěркелěхсене ěçе кўртсе пурăн-

нине сывлăх комиççин питĕ астуса тăмалла, çавăнпа сывлăх комиççин ђленĕсем халăх çурђĕсене тăтăшрах пăхса çӳрес пулаť; йĕркесĕрлĕхсем пулсассăн, вĕсене пĕтерме тăрăшмалла.

Сывлăх комиççи ђленĕсен халăх çуртсене пăхса çӳренипе - çеç иртмелле мар, кунта вĕсен питĕ тăрăшса та ĕçлемелле пулаť. Тепĕр ђух халăх çуртĕнђе тасалăх çукки çитменлĕхрен те килет, апла пулсассăн, сывлăх комиççин халăха пулăшма ăçтан та пулсан укçа тупма тăрăшас пулаť. Йалсенђе çак ырă ĕçшĕн укçа тупма çакăн пек çулсем пур: сывлăх комиççи тăрăшнипе шкулта, театтăр пулсан унта, тӳлевлĕ спектаккăљ лартма пултараççĕ, ирĕккĕн паракансенђен пухма пултараççĕ, т. ы. те.

## Сутуилӳ çурђĕсенђи тасалăхшăн йепле ĕçлемелле.

Йалсенђи сывлăх комиççисем сутуилӳ çурђĕсенђи (иртенçӳрен кĕрекен çуртсенђи, ђей-апат ĕçтерсе çитерекен пӳртсенђи, пасар урамĕнђи сутуилӳ тăвакан терлĕ лавккасенђи)

т. ы. вырăнсенђи тасалăхшăн та питĕ тарăшса ĕçлемелле. Сутуилӳ çӳртсенђе тасалăх тытмалли йĕркелĕхсене уйесри, йе тата шаларахри сывлăх пайĕ кăтартса туса паратˇ. Çак йĕркелĕхсене сывлăх комиççин ђленĕсем пур те лайăх пĕлсе, вĕсене вырăна кĕртме тăрăшса тăмалла. Çак йĕркелĕхсене йалти çынсен те пĕлмелле, çавăнпа вăл йĕркелĕхсене курăнмалли çĕре çапа-çапа хурас пулатˇ.

Сутуилӳ вырăнсене тăтăшрах пăхса çӳремелле, санитгари йĕркисене пăсни çинђен актă çырăс пулатˇ. Актă çинђе мĕн йенђен санитгари йĕркисене пăсни çинђен тĕплĕрех кăтартса пама кирлĕ, тата çав кăлтăксене пĕтерме вăхăт парас пулатˇ. Çак панă вăхăт иртсессĕн, сутуилӳ вырăнне тепĕр хут кайса пăхмалла, ун ђух та ĕлĕкхи пек йĕркесĕрлĕх пулсассăн, иккĕмĕш хут актă çырма кирлĕ. Малтан та, иккĕмĕш хут çырнă ђух та, актă çине сывлăх комиççи ђленĕ, йутран ик-виç çын алă пусмалла.

Сывлăх комиççи санитгари йĕркине пăсни çинђен çырнă актине сывлăх комиççи пăхса тухса, йал канашĕ урлă вулăсри ĕçтăвкома йаратˇ. Вулăсри ĕçтăвком тепĕр ђух хăйех

ĕçе татса парат҄, хăй татма пултараймасан, уйесри ĕçтăвкома йарат҄. Çапла вара, санит-тари йĕркине пăсакансем саккун умĕнђе утвет тытаççĕ.

## Çурт таврашĕнђи, урамсенђи тасалăхшăн йепле ĕçлемелле.

Çурт таврашсене, урамсене таса тытас йенђен çакăн пек йĕркелĕхсем пулас пулат҄:

1. Пӳртрен илсе тухакан тĕрлĕ çӳпçапа, мăшкăлтăк шывсене пӳрт çывăхне ăçта килђĕ унта тăкма йурамаст҄. Мăшкăлтăк шывне хăйне ăрасна, тĕрлĕ çӳпçап ваљљи хăйне ăрасна вырăн пулас пулат҄.

2. Çуртйĕр тасалăхне çурт хуçи тытса йĕркелесе тăмалла. Карташĕнђен пур йенне те тислĕк шывĕ йухса ан тăтăр. Çакăн пек тĕрлĕ тасамарсем ваљљи йĕркелĕрех шăтăксем ђавас пулат҄; шăршă-маршă çĕре сăрхăнса ан тăтăр тесе, шăтăкăн стенисене тăмпа хулăм-рах шăлмалла, тулсанах вĕсене тасатас пулат҄.

3. Çурт хуçи хăйĕн çуртне-йĕрне анђах мар, çурђĕ тĕлĕнђи хăйне тивĕçлĕ урам хуш-шине те тасатса йĕркелесе тăмалла.

4. Выљăх-ђĕрлĕхе урамсене варалама йамалла мар, сыснасем урам хушисене ђавса, шăтăкласа ан пĕтерђђĕр. Çак йĕркелĕхсене кашни йалтах ĕçе кÿртме тăрăшмалла, сывлăх комиççин вĕсене пухура пĕлтермелле, çак йĕркелĕхсем кирлине кашни çурт хуçи пĕлсе тăтăр. Сывлăх комиççин ђленĕсем йалти çуртсене, урамсене тăтăшрах пăхса çÿрес пулаť. Пуринђен ытла пасар урамĕсене тасарах тытма тăрăшмалла.

## Йалсенђе халăх мунђи лартма тăрăшас пулаť.

Ÿттире таса тытас тесен, ернесерен мунђа кĕрсе кĕпейĕм ылмаштарса тăмалла. Ђăвашсем пур те кашни ернерех мунђа кĕмеççĕ, хашин пÿртре кăшт ђÿхенипе-çеç иртсе кайаť, хăш çĕртре тата кăмакара çапăнакансем те пур. Таса тытманнипе ÿттир çăпан - сурана, кăрђанка кайаť; çак ђирсем ђăваш хушшинђе питĕ нумай.

Сывлăх комиççин ÿттир тасалăхшĕн питĕ тăрăшса ĕçлемелле, ђи пирвай йалта халăх мунђи лартма шухăшламалла. Анђах, ку пĕђĕк

ěç мар, ăна кăпăр-капăрах туса пăрахас çук. Малтан йал çыннисене халăх мунђи кирли çинђен, вăл халăхшăн усăллă пулмаллине тăнлантарса памалла. Халăх сукласçи парсан тин ку шухăша ěçе кўртме пулаť. Халăх мунђи йалшăн ђăнах та питě усăллă, питě кирлě йапала, вăл ăрасна мунђасенђен нумай йўнěрехе ўкмелле, лартсан та хутса тăма йўнěрех пулмалла. Çакна тăнласа илсен тин йалти çынсем мунђа лартма шухăш тытěç.

Йал халăх мунђи лартма йышăнсассăн, сывлăх комиççи пěлекен çынсене (тухтăрсене, тата сывлăх пайěнђен) ăçта лартма вырăнне кăтартса пама ђěнес пулаť. Мунђана туса пěтерсессěн, сывлăх комиççи мунђа йěркелěхсене туса параť. Кайран çав йěркелěхсене ěçе кўртнине астуса тăраť.

## Йалта ěçекен шыва йепле аванлатмалла.

Ěçекен шыва тěрлě йалта тěрлě çěртен илеççě: хăш йалта пусăран, хăш йалта çырмакўлěрен, хăш йалта çăлтан илеççě. Çăл шывě ěçме авантарах, вăл таса та пулаť. Анђах, çăла йěркелесе тирпейлě тытмасассăн, çăл шывě те вараланса ěçме йурăхсăр пулса

кайаҭ. Йал ҫӑл шывне ӗҫсе пурӑнаҭ пулсассӑн, сывлӑх комиҫҫин ҫӑлсене тирпейлӗ тытнине астуса тӑмалла. Пирӗн йалсенҗе тирпейлӗ ҫӑлсем питӗ сахал: ҫӑл пурисене питӗ тумаҫҫӗ, ҫавӑнпа ҫӳлтен ҫӗре сӑрхӑнса кӗрекен тасамар шыв ҫӑл шывне кайаҭ. Ҫӑл пурине лутра тунипе, тата витти ҫук пирки, ҫӳлтен те тасамар шыв йухса тӑраҭ. Шыва пыракансем харпӑр хӑй витрипе җиксе ӑсса, ҫӑл шывне вараласҫӗ. Сывлӑх комиҫҫисем ҫакӑн пек ҫӑлсене йусама тӑрӑшмалла. Ҫӑл тени лайӑх витӗлӗ пултӑр, пурисене питӗ тӑвас пулаҭ, шывне йухма вӑлак лартмалла. Ҫапла тусан тин ҫӗртен тухакан таса шыва ӗҫме май пулӗ. Ҫак йӗркелӗхсене питӗ хытӑ астуса ӗҫе кӳртсе тӑмалла.

Пусӑ шывне ӗҫсе пурӑнакан йалсем нумайтарах. Пусӑсен те ҫитменлӗхӗсем сахал мар. Пусӑ тенине йалта тирпейлӗ тытмаҫҫӗ, тарасаллӑ (кашталлӑ) пӗр патйепе ӑсмалли пусӑ сахал, харпӑр хӑй витрипе ӑсаҫҫӗ. Пусӑ таврашне ҫӗр купаласа сӑртлантарман пирки, кунта йаланах пылҗӑк ҫӑрӑлса тӑраҭ; сыснасем ҫу кунӗнҗе пусӑ патӗнҗи пылҗӑк ҫинҗе

выртса савӑнаççӗ, çӑмӑр щывӗпе тӗрлӗ тасамар шывсем те çакӑнталлах йухаççӗ.

Пусӑ таврашӗнђи шыв пусӑ шывне каймасӑр пулмасҭ, вӑл йе çӳлтенех йухса тӑраҭ, йе пурине питӗ туман пирки çӗртен сӑрхӑннипе пусӑ шывне кайса тӑраҭ. Çапла вара таса шыв ӗçес вырӑнне, шӑршлӑ варланђӑк шыв ӗçсе пурӑнаççӗ. Çӳлтен витмен пиркипе, çӳпӗ-çапӑ кӗрет.

Хӑш-хӑш йалсенђе кӳлӗ шывне, йе çырма шывне ӗçеççӗ. Шыв илмелли ӑрасна вырӑн пулмасҭ. Çавӑнтах кӗпе-йӗм çӑваççӗ, шыва кӗреççӗ, мунђала, сӳс-кантӑр хутаççӗ, выљӑхсене те çавӑнтах шыва кӳртеççӗ. Кӳлӗ шывӗпе çырма шывӗ етеме ђас ђире йараҭ, ку шыва ӗçсе варвиттийе кайса вилекенсем те сахал мар.

Йалти ӗçекен шыва аванлатасси сывлӑх комиççин ђи пысӑк ӗçӗ. Анђах йепле тумаллаха ку ӗçе? Ђи пирвай сывлӑх комиççин ђленӗсем лайӑх шыв мӗншӗн кирлине, тасамар шыв ђире йанине, тата ӗçекен шыва аванлатма мӗн тума кирлине, лайӑх шыва ӑçтан тупмаллине пӗлес пулаҭ. Çак ыйтусене тӑнлантарса, тухтӑрсем лекси вуласа пама

пултараççĕ, вĕсем çинђен ђăвашла çырнă кĕнекесем те пур.

Сывлăх комиççин тухтăрпа пĕрле йалти шыв илекен вырăнсене пăхса çӳремелле, вĕсен çитменлĕхĕсене тухтăр кăтартса парат̆. Пăхса çӳренĕ ђух йурăхсăр пусă тупсассăн, ăна тӳрлетме хушмалла, тӳрлетиђђен, шыв ан ăсђĕр тесе, ун пек пусса питĕрме кирлĕ. Унтан тухтăрпа пĕрлех пусăсене тирпейлĕ усрасси çинђен йĕркелĕхсем тăвас пулат̆, çав йĕркелĕхсем ак çаксем пулмалла:

1. Пусă таврашне тасамар шывпа, çӳп-çапăпа варалама йурамаст̆.

2. Выђăх-ђĕрлĕхе пусă çывăхне йамалла мар.

3. Пусăран харпăр хăй витрипе ăсма йурамаст̆.

4. Пусă таврашĕнђе кĕпейĕм çума йурамаст̆.

Сывлăх комиççин çак йĕркелĕхсене халăха пухура вуласа, мĕншĕн çак йĕркелĕхсем кирлине тăнлантарса памалла, кайран вĕсене ĕçе кӳртсе пурăннине сывлăх комиççин ђленĕсен астуса тăрас пулат̆. Йал çыннисем çырма

шывĕ ĕçеççĕ пулсассăн, сывлăх комиççин шыв илме ђи таса, питĕ меллĕ вырăн тупмалла. Шыв ăсмалли вырăнтан çӳлерех çырмара кĕпейĕм çума, шыва кĕме, сӳс-мунђала хутма йураманнине, пĕр сăмахпа каласан, варалама йураманнине кашниннех пĕлме кирлĕ.

Вĕреннĕ çынсем каланă тăрăх сикекен ђирсем ђасђасах шывпа сарăлса епитемисем пулаççĕ. Пĕр пусă тирпейсĕр пулсассăн та сикекен ђир мĕн пур йала сарăлма пултараť. Çавăнпа сикекен ђир çӳренĕ вăхăтра пĕр касăра тасамар шыв ĕçсе пурăнни, пусăсене тирпейсĕр тытни ытти касăсенђи çынсемшĕн те сийенлĕ йапала. Апла пулсассăн, пусăсене йусас ĕç, йал, халăх ĕçĕ пулмалла, ăна мĕн пур йал пĕрлешсе тăвас пулаť. Пусăсене тӳрлетнĕ ђух, ак çаксене пĕлме кирлĕ.

1. Пусă пури питĕ пултăр—çӳлтен сăрхăнакан тасамар шыв ĕçекен шыва ан варалатăр.

2. Пусă пури çĕрпе тан çеç ан пултăр, çĕртен аршăн çурра йахăн çӳлерех хăпартса, çăмăр шывĕ анмалла мар çийеле хушмаđă туса витмелле.

3. Пусӑ таврашне ҫӗр купаласа сӑртлантармалла—унта пылҕӑк шывӗ кӳленсе ан тӑтӑр.

4. Кашни пусӑ ҫумӗнҕе ӑсма ӑрасна савӑт (патйе) пултӑр—шыва пыракан харпӑр хӑй витрине таса шыва ан ҕиктӗр.

5. Выҙӑхҕӗрлӗх шӑварма вӑлашкине пусӑ ҫывӑхнех лартас пулмаст—выҙӑх шӑварнӑ ҕух пусӑ таврашне ирсӗрлентерет.

Ҫак йӗркелӗхсене сывлӑх комиҫҫин ӗҫе кӳртме тӑрӑшмалла.

## Сикекен ҕирсемпе йепле кӗрешмелле.

Сикекен ҕир тесе ҫынран ҫынна куҫакан (йерекен) ҕире калаҫҫӗ. Ун пек ҕирсем сахал мар. Тепӗр ҕух сикекен ҕир сарӑлса, епитими пулса, тем ҕухлӗ сийен кӳрет. Акӑ мӑйан ҫулне аса илерха. Ун ҕух тиф ҕирӗсемпе мӗн ҕул ҫын вилмерӗ пуҙ. Тиф ҕирӗсем анҕах мар, ытти сикекен ҕирсем те—ҕеҕек (ҕеҕҕе), хӗрлӗхен, скарлатин, ҕаххоткӑ, ҫифилис, тата ыттисем те, халӑха пысӑк сийен тӑваҫҫӗ.

Сикекен ҕирсемпе кӗрешес тесессӗн, вӗсем мӗнрен пулнине, йепле сарӑлнине пӗлмелле.

Ђир тенине пактерисем тăваççĕ, çав пактерисем ăша кĕрсен етем ђирлет. Пактери тăвакан ђирсем пурте пекех сикекен ђирсем. Сикекен ђирпе сывмарланнă çынтан ђирлĕ тăвакан пактерисем сывă çын çумне сывлăшпа, йе апатçимĕçпе, йе тата сывăмар çын çумне, ун тумтирри çумне сĕртĕннипе куçса ђире йараççĕ. Тиф ђирне тăвакан пактерисем пыйтăпа, сивĕ ђире (маљари) тăвакан пактерисем вăрăм тунапа куçаççĕ. Сикекен ђир халăх хушшинђе çўренĕ ђух, сывăмар çынтан сыхланма кирлĕ. Çавăнпа сикекен ђирпе сывăмарланнă çынна сыввисенђен уйăрма васкамалла, вăл ăрасна вырăнпа выртса тăтăр, ăна ăрасна тирĕк-кашăкпа çитерес пулаť.

Йалта епитеми пулса сикекен ђир çўренĕ ђух, сывлăх комиççин питĕ тăрăшса ĕçлемелле. Сикекен ђирпе ђирленĕ çынна хăвăртрах пуљнитсана леçмелле. Йалта лашасăрсем пулĕç —сывлăх комиççин ун ђух, лашасăр сывăмар çынсене пуљнитсана леçме йал советђĕ урлă халăх лавĕ тупса парас пулаť.

Халер, йунлă варвитти, вар ђирĕ халăх ĕçме ăсакан шывран сарăлаť. Ун пек ђухне çав шывсене таса тытма тăрăшмалла. Çĕпĕр

ђирĕ ђире йернĕ выђăхран, выђăх виллисенђен сарăлаҭ—сывлăх комиççин çавăн пеккине астумалла. Тĕрлĕ ђир тĕрлĕ май пулса сарăлаҭ. Сывлăх комиççин çавăн пеккисене пĕлсе, ђир умне ўксе, ăна сарăлма парас пулмасҭ. Мĕнле ђир сарăлма пуçласан, мĕн тума кирлине пĕлме, сывлăх комиççи ђленĕсем йерекен ђирсем çинђен пĕлес пулаҭ. Йерекен ђирсем çинђен тухтăр Зефиров пĕр кĕнеке çырнă,—сикекен ђирсем çинђен пĕлес текенсем çавна вуламалла.

Халăх çинђе сикекен ђир çўренĕ ђух, сывлăх комиççисем тухтăрсене нумай пулăшу пама пултараççĕ, сывлăх комиççисем пулăшнипе тухтăрсем халăх инкекне хăвăртрах пĕтереççĕ. Акă сăмахран калăпăр: ђеђек текен ђир кашни çул тенĕ пекех пирĕн йалсенђе пулаҭ; йала пырса кĕрсессĕн, вăл ђир пĕр çынна кăна макăртмасҭ, ун пирки ађа амăшĕсем нумай куççул тăкаççĕ, вăл ђир пирки ĕмĕрне куççăр пулса хупланса ларакансем те сахал мар. Ђеђек ђирĕ куђттурлă халăх хушшинђе питĕ сайра пулаҭ. Мĕншĕн аплаши вăл? Мĕншĕн тесен, куђттурлă халăх ђиртен сыхланма пĕлет, вăл тухтăрсем

вĕрентнĕ пек пурăнма тăрăшаҭ. Ђеђекрен сыхланма çăмăл: ђирлес мар тесессĕн, ђеђек анђах кастарас пулаҭ.

Епир кунта пур сикекен ђирсем çинђен те пĕрле каларăмăр, халĕ тата тепĕр сикекен ђир çинђен—траххом çинђен ăрасна калар.

**Траххом текен куç ђирне пĕтересшĕн тăрăшмалла.**

Траххом куç ђирĕ иккенне епир пурте пĕлетпĕр, анђах вăл йепле пулса пынине, вăл мĕншĕн ђăваш хушшинђе питĕ сарăлнине йалти çынсем нумайĕшĕ пĕлмеççĕ.—Траххом çинђен пĕлни тырă тума пĕлни пекех кирлĕ; суха патне епир ытти ĕçе пăрахса кайатпăр, траххом çинђен пĕлме те пирĕн çавăн пек вăхăт тупас пулаҭ, тет тухтăр Йефремăв. Траххом пĕр çынтан тепĕр çынна йерекен ђир. Çапла пĕр çынтан тепĕр çынна йерсе тăнипе траххом пулса пыраҭ, вăл пĕтмест. Ђăваш хушшинђе ку ђир йепле, пулса сарăлса пынине кăтартма паçăр асăннă Йефремăв тухтăр сăмахĕсене ўкерем, вăл калаҭ:

1) Кăмака кĕтессинђе ерни-ернипе пĕр кипке çакăнса тăраҭ. Шыв курмасăр хытса

каштăртатса кайаҭ. Çав кипкепе пӳртри халăх пиҕёсене, куçёсене шăлаççё. Ҕипер куçлисем çав куç пӳрёсене шăлса илеççё. Вара пăсăлас мар куçах пăсăлаҭ.

2. Мунҕа кёнё ҕух, пурте пёр каткари шыв çине аллисене пырса ҕикеççё. Пиҕёсене çунă шыва каткана йарса хăвараççё. Пăсăк куçлисем куç пӳрёсене каткана йараççё. Ҕипер куçлисем çав пӳрлё шыва куçёсене кӳртеççё. Вара пăсăлас мар куçах пăсăлаҭ.

3. Амăшё аҕисен пиҕё-куçёсене хăй пăсăк куçне тыткаланă аллипе шăлаҭ, йе пăсăк куçне шăлнă кёпе аркисемпе шăлаҭ. Аллисем çумне çыпăçнă, кёпе аркисем çумне çыпăçнă куç пӳрёсене аҕисем куçне кӳртет. Вара пăсăлас мар куçах пăсăлаҭ.

4. Пёр çытар çинҕе темиçе çын выртсатăрса пурăнаççё. Çытар пиҕё тахçанах сăрланса кайнă. Пăсăк куçлисем çытар çумне куç пӳрёсене, куççул, йухнисене çыпăçтарса хăвараççё. Ҕипер куçлисем çав усала куçёсем çумне çыпăçтарса илеççё. Вара пăсăлас мар куçах пăсăлаҭ.

5. Асламăшё айван пёҕёк аҕасене куç тёкёсене кăларттараҭ. Аҕасем пёринҕен ытла

тепри кăларасшăн хавасланаççĕ. Тĕкĕсене кăларнă ђух, пӳрнисем çумне çыпăçтарса илнисене кайран куçĕсене сĕркелесе йараççĕ. Вара пăсăлас мар куçах пăсăлаŧ.

6. Тепри куç çӳппине ђĕлхипе кăлараŧ хăй пăсăкне çын куçне кӳртсе хăвараŧ. Вара пăсăлас мар куçах пăсăлаŧ.

Çак сăмахсенђен трахом йепле пулса пыни паллă ĕнтĕ, ку сăмахсене ĕненмеллех, мĕншĕн тесен, вĕсене наукă кăтартнипе çырнă—наукă каланни йаланах тĕрĕс. Трахом сикекен ђир пулсассăн, унтан сыхланма кирлĕ, унтан сыхлансассăн ђипер куç пăсăлмĕ. Йалти çынсем çапла сыхланма пĕлмеççĕ. Сыхланман пирки лайăх куçах пĕтсе лараŧ. Тепĕр йенђен пăсăлнă куçа тӳрлетекенсем те сахал, çапла куçшăн тăрăшман пирки тӳрлетсен пулас куçах пĕтсе лараŧ.

Çапла ĕнтĕ—трахом текен куç ђирне пĕтерме икĕ çул пур: пĕри—пăсăк куççене емеллесси, тепри--ђипер куççене пăсăк куççенђен сыхласси. Ђăнах та пайантан тытăнса мĕн пур пăсăк куçлă етем пикенсех емелленме пуçласассăн, пĕр-ик çул хушшинђе трахом ђирĕн йађĕ анђах йулĕђђĕ—пăсăк куç емелле-

сен сывалаť, вара сывă куçа сыхламалли те пуђмĕђђĕ, тепĕр йенђен, пайан кун ђипер куçлă çынсем, çамрăкки те, ватти те, траххом сикекен ђир иккенне пĕлсе унтан сыхланма пултарсассăн, пăсăк куçлисем вилсе пĕтсен траххом ђирĕ те пĕтĕђђĕ. Анђах хађхи вăхăтра мĕн пур пăсăк куçа тӳрлетсе пĕтерессипе мĕн пур ђипер куçа пăсăк куççенђен сыхласа ĕлкĕресси пĕђĕк ĕç мар, çапла тусан траххом пĕтет тесе калама сăмахпа çеç çăмăл, ĕçне тума йăвăр.

Пирĕн йалсенђе кашни килĕрен тенĕ пекех пăсăк куçлисем пур, ашшĕ-амăшĕ пăсăк куçлă пулсассăн çемйере ђипер куçли питĕ сайра пулаť. Пăсăк куççене тӳртлетсе пĕтерессി ђăнах питĕ пысăк ĕç. Ку ĕçе пикенсех тытăнас тесессĕн кашни йала емелçĕсем йарас пулаť, апла тума епир тухтăр та, хвершăл та тупса çитерес çук. Çапах та пăсăк куçа сыватамах тесен çын куçлă пулма пултараť.

Хађхи саманара пуђнитсăсем йышлăлана пуçларĕç, пур пуђнитсăсем йусанса пыраççĕ, çулсерен йалсенђе куç тухтăрĕсем ĕçлеççĕ. Анђах пирĕн ђăвашăн çакăн пек çитменлĕх пур: вăл пуђнитсăна кайас вырăнне йумăça

çӳререх парат̆, пурте тухтăра каймаççĕ, кайсассăн та тухтăр каланă пек тумаççĕ, вĕсем траххом ђирне пĕр-иквиç хуђђен куçа емел йанипех тӳрлетесшĕн. Вăл апла пулмаст̆. Траххом тени ђас тӳрленекен ђир мар, ăна уйăхласа, тепĕр ђухне çулласа емеллес пулат̆. Çийĕнђе емелленекен пăсăк куçлă çын йаланах ђипер куçлă пулма пултарат̆, çийĕнђех емелленмесессĕн, куçа тĕк тухма пуçлат̆. Тĕк тухакан куç емелпе сывалмаст̆, ăна кастарас пулат̆; вăхăтĕнђе кастармасассăн, етем йаланах суккăр пулат̆.

Епир паçăр траххом сикекен ђир терĕмĕр. Çакна йалти çынсем пĕлмеççĕ, çакна пĕлмен пирки ку ђиртен сыхланмаççĕ те, сыхланма та пĕлмеççĕ. Çапла пĕлменни пире хупласа пурăнат̆, епир пăсăк куçлă пулни нумайĕшĕ çакăнтан килет темелле. Мĕн тăвас-ха? Пайантан пуçласа ђăваш ашшĕ-амăшĕ, ывăлĕ-хĕрĕ, çамрăкки те, ватти те траххом çинђен пĕлме тăрăштăр, вăл сикекен ђир иккенне, унтан ђипер куçа сыхлама май пуррине пĕлтĕр, пĕлекенни пĕлменнине пĕлтерме тăрăштăр, ђăваш инкекне пĕтерес тесен çакна ђи пирвай тумалла. Траххом ђăваш халăхин тăш-

манĕ, тăшмана вĕренсе пĕлсен тин çĕнме пулаť.

Мĕн пур пăсăк куçа тӳрлетсе пĕтерме йăвăр пулсассăн, халђхи вăхăтра ђипер куçа сыхласси те çăмăл ĕç мар. Çапах та ђиртен сыхланасси емелленессинђен çăмăлтарах, ђипер куçа сыхламах тесессĕн, ђипер куç пăсăлас çук. Камăн питĕ сыхланмалла-ши? Тата кама питĕ сыхламалла-ши? Çемйере ашшĕ-амăшĕ пăсăк куçлă пулсассăн, вĕсен ађисем те йаланах пăсăк куçлă пулаççĕ. Мĕнле-ха ку капла! Йепле пăсăк куçлă ашшĕ-амăшĕнђен йаланах пăсăк куçлă ађасем çуралаççĕ-ши? Çук! Вăл апла пулмасť, вăл пăсăк куçлисем хушшинђе тепĕр ђух ђипер куçлă ађасем пулнинђен те паллă. Пăсăк куçлă ашшĕ-амăшин ађисем пăсăк куçлă пулни ашшĕ-амăшин ђирĕ ађисене йернипе пулаť, вăл ђăнах та çапла. Акă тата илер. Пăсăк куçлă хĕр кађђа тухаť те, пурăнсан пурăнсан упăшкин те ђипер куçĕ пăсăлса кайаť, йе упăшкин пăсăк куç пулса арăмин ђипер куçĕ пăсăлса кайаť, ку та пăсăк куç ђирĕ ђипер куçа йертнипе пулаť. Çапла ашшĕ-амăшин ђирĕ ађисене йернипе, пиђђĕш-аппăшсен ђирĕ çамрăкрах-

хисене йерсе пынипе, траххом ђирĕ пулса пырат̆, çапла пĕринђен тепĕрне йерсе пынипе ку ђир тахçан авалтан тытăнса, ђăваш халăхĕнђен уйрăлмасăр, пайанхи куна çитнĕ. Çапла ђăваш халăхĕ ĕлĕкренпех траххомлă, пайанхи кун та траххомлă. Малашне те çапла пăсăк куçлă пулĕ-ши? Ку инкекрен сыхланмасассăн, емеллеймесессĕн, вăл пĕтмĕ, малашне те ђăваш туйапа çӳрĕ.

Пуринђен ытла пăсăк куçлă ашшĕ-амăшсен хăйсен пăсăк куçĕнђен ђирĕ ађисене йересрен сыхлас пулат̆. Ашшĕ-амăшне ађисем такамран та çывăх, вĕсен ђирĕ те ађисене çав таранах çывăх; ађана пуринђен ытла çывăххи—амăшĕ. Апла пулсассăн, амăшĕ пăсăк куçин ђирĕ ађине ҳăвăртрах йерме пултарат̆. Çавăнпа ђи пирвай амăшин ађисене астуса пурăнмалла. Тăн кĕмен ађасене ђир хăвăртрах йерет,—вĕсем хăйсене хăйсем сыхлаймаççĕ, çавăнпа ађа-пăђана пуринђен ытла çамрăк ђух сыхлама кирлĕ. Ађасем пăсăк куçлă пулнишĕн йаланах ашшĕ-амăшĕ айăплă, пуринђен ытла амăшĕ айăплă, мĕншĕн тесен вăл амăшĕ пăхма пĕлменнинђен килет. Ђăваш арăмĕсем çакна пĕлмеççĕ, вĕсем

хăйсене хăйсем айăпласшăн мар, мĕн те пулин урăх сăлтав тупса — ăнсăртран пулђĕ, йе виле тытрĕ тесе, йе тата мĕн те пулсан тупса, пăсăк куçлă ађисемшĕн пăшăрханакан ђĕрисене пусараççĕ. Çапла туни шывра путакан çынна пулăшу памасăр çырма хĕрринђе „ай-ууй“ тесе тăнă пек çеç пулаť. Ђăваш арăмĕсен ађисем „ай-ууй“ тесе ађашласа усранă çĕртрех пăсăк куçлă пулса кайаççĕ. Вĕсенђен ĕçе йурăхсăр çынсем, ўссен мăшăрланаймасăр йулакансем пулаççĕ, вара „ай-ууй“ тенĕ хыççăн куççуђ тăкăнни те тем ђухлĕ. Анђах ађа амăшĕ пуласси питĕ пысăк ĕç, пăсăк куçлă амăшĕнђен ђирĕ ађине йерни амăшне калама çук пысăк айăп. Çакăн çинђен ђăваш арăмин шухăшласа пăхмаллах, арăм пулсан тин анђах та мар, çамрăк хĕрсен те çакна астуса пăсăк куççене тўрлетсен тин кађђа тухма шухăшлас пулаť. Çапла ĕнтĕ, траххомран пуринђен ытла çамрăксене сыхларах парас пулаť. Мăннисем те пăсăк куçлисем хушшинђе сыхланмасăр пурăнсассăн ђипер куçлă пулаймаççĕ. Паçăр Йефремăв тухтăр сăмахĕсене çырса, траххом ђăваш хушшинђе мĕнле майпа сарăлнине пĕлтертĕмĕр,

çавсем пурте ђăваш пурăнăçин çитменлĕхĕсем, вĕсене мĕн вăй çитнĕ таран пĕтерме тăрăшас пулаť.

Трахҳом ђирне пĕтерес йĕркепе йалсенђи сывлăх комиççисем питĕ тăрăшса ĕçлемелле. Сывлăх комиççин ђленĕсем хăйсен çак ђир çинђен тĕплĕрех пĕлме тăрăшас пулаť, çак ђир çинђен çырнă кĕнекесем вуламалла, халĕ ун пек кĕнекесем пур. Акă Йефремăв тухтăр çырнă кĕнекене илер. Ку кĕнекене тĕп ђăваш ђĕлхипе питĕ пĕлсе çырнă, кунта тухтăр Йефремăв наукка кăтартнипе ђăваш халăхне ăс параť, вăл кашни ђăваш пӳртĕнђе пулмалла кĕнеке, ăна çырăва пĕлекенĕн пурин те вуласа тухса тăнласа илмелле, çырăва пĕлменнине унта мĕн çырни çинђен сăмахпа каласа пĕлтермелле. Унта Йефремăв тухтăр тата трахҳом ђирне пĕтерес йĕркесене те кăтартса панă, çавсене сывлăх комиççисен пурне те ĕçе кӳртме тăрăшас пулаť.

Йалти çынсене тухтăрсем трахҳом çинђен лексисем вула-вула пађђăр, унпа кĕрешмелли йĕркесене каласа пађђăр. Çаксене ђăвашла каласан тата авантарах, — ђăваш ђĕлхипе каланине хĕрарăмсем те ăнланаççĕ. Лекси

вулакана ђёнсе килесси, лекси вуланӑ çӗре халӑха пухасси сывлӑх комиççин ӗçӗ.

Йал пуљнитсаран инçе пулсассӑн, лашасӑрсене траххом ђирӗнђен хӑтӑлма питӗ хӗн, çавӑн пек лашасӑрсене сывлӑх комиççин йал канашӗ урлӑ халӑх лавӗ тупса пама тӑрӑшас пулаť.

Кунта тата траххом çинђен кӗске калусем çырса парар, вӗсем ак çаксем:

1. Траххом сикекен — пӗрӗнђен тепӗрне йерекен ђир, унтан сыхланас пулаť.

2. Пӑхма пӗлмен пирки çамрӑк ађасен куçӗ пӑсӑлса кайаť, пӑха пӗлсен пӑсӑк куçлӑ амӑшин те ађи ђипер куçлӑ пулаť.

3. Ађана траххом йернишӗн амӑшӗ айӑплӑ—вӑл амӑшин ђирпе ђирлет.

4. Ђӑваш пӳртӗнђе пӑсӑк куç нумайӑи алшӑлли сахаллинђен килет.

5. Траххом пирки ђӑваш туйа тытаť.

6. Вӑхӑтӗнђе емеллесен пӑсӑк куç ђипер куçах пулаť.

7. Тӗк тухакан куç емелпе йусанмасť, ӑна кастарас пулаť.

8. Тӗк тухакан куçа кастармасассӑн, вӑл пӗтсе лараť.

**Йал çыннисене саниттари тӗлӗшӗнђен пал-лаштарас пулаť.**

Наукка çуттине курмасăр пурăнакан халăх тӗттӗмре тӗмсӗлет, вăл, саниттари ыйтăвӗсене ăнланайман пирки, хăйӗн сывлăхӗшӗн те тăрăшма пӗлмест. Халăха çутта кăларасси патшалăх ӗçӗ, йалсенђи çынсене саниттари йенђен çутатасшăн тăрăшасси, вӗсене саниттари ыйтăвӗсемпе палаштарасси—сывлăх комиççин ӗçӗ. Саниттари ыйтăвӗсене ăнлансан тин йалти çын хăйӗн сывлăхне сыхлама пӗлет, вара сывлăх комиççисене те ӗçлеме çăмăлтарах пулаť. Хађхи вăхăтра сывлăх комиççи йалти çынсене саниттари йенђен çутатма питӗ хытă тăрăшас пулаť, сывлăха сыхлама кирлине йаланах астуса тăмалла. Лектсисем çеç йалти тӗттӗме сиреймӗç — пуђнитсăри тухтăр йалсенђе тăтăш лекси вулама пултараймасť, унăн ӗçӗ пуђнитсăра та нумай. Халăха саниттари йенђен çутатма урăх çулсем те пур. Халӗ сывлăха йепле сыхламалли çинђен, — тӗрлӗ ђирсем çинђен çырнă ђăвашла кӗнекесем нумай, çавсене халăх хушшине салатма тăрăшас пулаť. Çырăва

пӗлекенсем ҫав кӗнекесене вулаҕҕӑр, ӑнланҕҕӑр, кӗнеке ҫинҕе кӑтартнӑ пек пурӑнма тӑрӑшҕҕӑр, ҫырӑва пӗлменнисене сӑмахпа вӗренҕҕӗр.

Кашни вуламалли ҫуртра, клупра, шкулсенҕе сывлӑх кӗтессисем пулмалла. Ҫак кӗтессенҕе сывлӑх ҫинҕен ҫырнӑ кӗнекесем, тӗрлӗ ӳкерҕӗксем, кӗске калусем, плаккатсем, т. ы. те пулмалла. Йалсенҕе саниттари суҕӗсем (сансут) лартнине питӗ ырламалла, тата „саниттари кӑтартусем" те нумай усӑ параҫҫӗ. Ҫак кӑтартусене сывлӑх пайӗнҕен илме пулаť.

## Аҕа амӑшӗпе аҕасен сывлӑхне сыхласси.

Аҕа амӑшӗпе аҕасен сывлӑхне сыхласси пит пысӑк ӗҫ, ҫак ӗҫе йалти сывлӑх комиҫҫисем пикенсех тытӑнас пулаť.

Ҫамрӑк аҕасен сывлӑхне сыхлас ӗҫре ҕи малтан ҫулласенҕе йаҫлӗсем тумалла, ҫак ӗҫе сывлӑх комиҫҫин тапратас пулаť. Ку шухӑша сывлӑх комиҫҫи хӑй кӑна ӗҫе кӳртме пултараймасť, кунта йал канашӗпе тата хӗрарӑм пайӗ те пӗрлешсе ӗҫлемелле. Йалта йаҫлӗ

тăвасси çинђен уйесри сывлăх пайне пĕлтерес пулаť. Сывлăх пайĕ кун пек ĕçе тума пулăшаť: вăл укçа параť. кирлĕ çынсем йараť. Тепĕр йенђен, йал çыннисем хăйсем те ку ĕçшĕн тăрăшмалла. Çуллахи кунсенђе йаçлĕ валли пушă çурт тупма çăмăл. Шкулсем ун ђух ахалех пушанса тăраççĕ, унта йаçлĕ тума питĕ аван, урăх ăпăр-тапăрсене çеç тупас пулаť. Йаçлĕсем йалти çынсене нумай усă параççĕ. Пĕр йенђен хĕрарăм ађа пăхса ĕçлес вăхăтне иртермест, тепĕр йенђен — ађасене йаçлĕсенђе лайăх апат çитерсе лайăх пăхаççĕ, çуллахи кунсенђе ађана пăхма, çитерме пĕлмесессĕн, вăл ђасах ђирлет.

Ађа амăшин сывлăхне сыхлас тесессĕн, йалти тĕттĕмлĕхпе, йалти суйалăхпа кĕрешес пулаť. Тĕттĕм пирки суйалăха ĕненсе пулђнитсăна кайас вырăнне йăвăр çын çăмăлланма епиш карђăкĕ патне кайаť. Çăмăлланнă ђух тивĕçлĕ пулăшу курмасăр йалти хĕрарăмсем тем ђухлĕ асапланаççĕ, вилекенсем те пулаççĕ, вăрăм ђире кайса ĕçе йурăхсăр пулакансем те сахал мар Хуласенђе хаљ ађа амăшсен сывлăхне сыхлас йĕркепе йăвăр çынсем валли консуљтатсийĕсем тунă. Унта

йăвăр çын ђух сывлăха йеплесыхласа пурăнмаллине каласа параççĕ. Ăшри ађа килĕшӳсĕр вырăнаçăнса выртнине малтанах пĕлме кирлĕ. Акă ађа урлă килет, ун пек ђух хĕрарăм епиш карђăкĕпе çăмăлланса нихăçан та сывă йулаймасť, вăл вилет. Ађа урлă килнине вăхăтĕнђе çавăрса йарас пулаť, ун пек тума епиш карђăкĕсем пĕлмеççĕ. Тепре каласан, епиш карђăкĕ тени çăмăлланакан арăм патĕнђе таса алăсемпе ĕçлемест, таса йапаласемпе тыткаламасť.

Кунта тухтăрсем каланă пек тасалăх кирлĕ. Тухтăрсем каланă тăрăх алă-ура çумĕнђе, тыткалакан йапала çинђе йаланах ђир тăвакан пактерисем пулаççĕ, шывпа супăњпе çунипе анђах вĕсенђен тасалма çук, тата алăсене пактерисене вĕлерекен шĕвекпе çумалла. Пактери суран çине лексен—етем ђирлет. Хĕрарăм çăмăлланнă ђух унăн хунав тавраш-сем суранланаççĕ, çавăнпа çăмăлланакан хĕрарăм патĕнђе алăсене, тыткалакан йапаласене, тухтăрсем каланă пек тасатса ĕçлесен çеç, хĕрарăм сывă пулма пултараť. Йалти хĕрарăмсем çакна пĕлсессĕн епиш карђăксене ђĕнмĕђђĕç, пуљнитсăна кайса çăмăлланĕђђĕç.

Йалти тĕттĕмлĕхпе суйалăхран хăтăлас тесессĕн, йалсенђе тăтăшрах лектсисем вулас пулаť, йăвăр çын ђух йепле пурăнасси çинђен, çăмăлланас йĕркесем çинђен хĕрарăмсем тĕплĕрех пĕлђђĕр. Кун пек лектсисене йалти хĕрарăмсем йуратаççĕ, сывлăх комиççин вĕсене тăтăшрах тума тăрăшмалла.

### Шкул ађисен сывлăхне сыхласси.

Сывлăх комиççисем шкул ађисен сывлăхне сыхлас йĕркепе те ĕçлес пулаť. Кунта ђи пирвай шкулсене йĕркелемелле. Шкул тени саниттари йĕркине ĕçе кӳртсе пурăнмалла, шкулта çын вĕренмелле тасалăх пултăр, йалти çынсем шкулти тасалăха курса йĕркеллĕ пурăнма вĕренђђĕр. Шкул йĕркеллĕ, таса, çутă пулни ађасен сывлăхшĕн питĕ кирлĕ, шкул ађисем ђирлени нумайĕшĕ шкул йĕркесĕрлĕхĕнђен килет. Пирĕн йалсенђи шкулсен çитменлĕхсем нумай. çавсене пĕтерме сывлăх комиççин те йавăçас пулаť, ку ĕçе унăн йал канашĕпе пĕрле тумалла.

Шкулсенђе ађасене апат пани вĕсен сывлăхĕшĕн питĕ усăллă пулмалла, вăл питех

хакла та ӳкес çук. Ку ĕçе сывлăх комиççи йал канашĕпе пĕрле тума пултарат̌.

Шкул патĕнђе ађасем валли кимнаçтик тумаллисене туса парасси, выђамалли вырăн туса парасси йалти сывлăх комиççин ĕçĕ. Ку ĕçе те вăл йал канашĕпе пĕрле тума пултарат̌.

## Халăха ĕçке йересрен сыхлас пулат̌.

Халăх ĕçке йерни сывлăхшăн питĕ сийенлĕ, екకономĕк йенђен пăхсан та вăл ырă йапала мар, çак халăх тăшманĕпе вăй çитнĕ таран кĕрешес пулат̌.

Йалсенђе халĕ самокон ĕçеççĕ. Сывлăхшăн самоконăн сийенĕ таса ерехрен нумайрах. Таса ереке те пăхма анђах таса, вăл ĕçекене хăй мĕн кăтартассине кăтартатех. Сывлăх комиççисем йалсенђе самокон вĕретекенсене ђарма тăрăшас пулат̌. Пирĕн халăх праçниксенђе ĕçме йуратат̌, çапла праçниксенђе ĕçе ĕçе нумайĕшĕ ĕçке йерсе ҡайаççĕ. Çавăнпа халăх шухăшне праçниксенђе урăх йенелле тайăлтармалла: праçниксенђе спектакклђсем, консертсем, лексисем лартма тăрă-

шас пулаť. Куншăн сывлăх комиççин тăрăшмалла. Мăн сынсем ĕçнине курса çамрăккисем те ĕçке йерме пултараççĕ, ку калама çук сийен йапала, унпа питĕ тăрăшса кĕрешес пулаť.

## Тăрласа калани.

Йалти сывлăх комиççин ĕçĕ нумай, ăна пĕр харăсах туса пĕтерме пултараймасť. Пирĕн аслă вĕрентекен Ленин çапла каланă: нумай ĕçе çийелтен кăна тăвађђен сахал ĕçе тĕплĕрех тăвас, тенĕ. Çавăн йевĕрлĕ, сывлăх комиççин те малтанах нумайа хапсăнса ĕçе тăви-тăвайми хăварас пулмасť, сахалтан пуçласа кайран мĕн вăй çитнĕ таран çеç нумайраха тытăнас пулаť.

---

## ХУШСА ХУНИ.

1925-мĕш çулта нойапĕр уйăхин 12-мĕш кунĕнђе вулăсри сывлăх канашсемпе йалсенђи сывлăх комиççисем тăвасси çинђен Ђăваш Тĕпĕçтăвкоме туна йышăну:

Р. С. Ф. С. Р. Сывлăх Комиссарийађĕ к/ç март уйăхин 11-мĕш кунĕнђе панă ђирккуљарне ĕçе кӳртме, халăх сывлăхне сыхлас ĕçе, йалти çынсене хăйсене йавăçтарса тĕплĕрех туса пырас тесе Ђ А.С С Р. Тĕпĕçтăвкомĕак çакна й ы ш ă н а т (постановлени тăват):

1. Пур çĕртре те кашни вулĕçтăвком çумĕнђе сывлăх канашĕ, кашни йал канашĕ çумĕнђе сывлăх комиççи тумалла (орканисатсилемелле). Вулĕçтăвком ђленсенђен пĕрне, тата хĕрарăм пайĕнђен, комсомолтан, пулăшу комиттетĕнђен, копперагси йĕркине ĕçлекенсенђен, профсойусран, ушкăн йалсенђен пĕрер çын вулăсри сывлăх канашне кӳртсе, çак пĕрлешĕве пуçласа йамалла. Вулăсри сывлăх канашне тата уйесри санитари тухтăрĕпе, çывăхри тухтăрсене те кӳртмелле.

Йал канашĕ ђленĕсенђен пĕрне, çывăхри тухтăра, йалçынnисенђен, комсомолтан, копператси йĕркине ĕçлекенсенђен, уђђитлĕсенђен йал сывлăх комиççине кӳртсе, çак пĕрлешĕве пуçласа йамалла.

А с ă р х а н и: Вулăсри сывлăх, канашĕнђе ĕçлеме хуť мĕнле пĕрлешӳсенђен те, йутри тухтăра та ђĕнме йураť.

2. Вулăсри сывлăх канашĕсене вулĕçтăвкомсем, йал сывлăх комиççисене йал канашĕсем пуçласа йамалла.

3. Ђ.А.С.С.Р. Сывлăх Комиссариађин икĕ ерне хушшинђе вулăссенђе сывлăх канашĕ, йалсенђе сывлăх комиççи тумалли çинђен, тата вĕсене йепле пуçласа йамалли çинђен инструксисем салатса вулăссенђе уђрешђенисене пĕлтермелле.

Ђ.А.С.С.Р. Тĕпĕçтăвкомин
претçетаттĕлĕ **И. Илларионăв.**

Ђ.А.С.С.Р. Тĕпĕçтăвкомин çыруçи
**П. Михайлăв.**

---

1925-мĕш çулта нойапĕр уйăхин 11-мĕш кунĕнђе Ђ. А. С. С. Р. Тĕпĕçтăвкомĕ вулăсри сывлăх канашĕсемпе йалсенђи сывлăх комиç-

çисен ĕçне пуçласа йамалли çинђен тунă йышăнуне йепле ĕçе кӳртмеллине ЂАССР Сывлăх Комиссариађĕ кăтартса пани (полошени):

## I. Вулăссенђи сывлăх канашĕсем çинђен.

1. Халăх сывлăхне упрама (усрама) халăха хăйне вĕрентес йĕркепе, тата халăх сывлăхне сыхлас ĕçе йал çитменлĕхсем йенђен тĕплĕрех туса пыма, йалти çынсене йавăçтарас тесе, кашни вулĕçтăвком çумĕнђе, тата йалсенђе сывлăх йĕркипе ĕçлекен тĕрлĕ уђрештенисене, т. ы. те, пĕрлештерсе тăрса, вĕсен ĕçне йертсе пыма **сывлăх канашĕ** пулмалла.

2. Вулăссенђи сывлăх канашĕсем 1922 çулта çенђђапĕр уйăхин 15-мĕш кунĕнђе Респупլĕкри Комиссарсен Канашĕ тунă текрет кăтартнипе, тата Р. С. Ф. С. Р. Тĕпĕçтăвкомĕн çеççийĕ II-мĕш йыхăрăвĕнђе тунă йышăнусем тăрăх ĕçлемелле. Вулăссенђи сывлăх канашĕсем умĕнђе çак ыйтусем пулмалла:

1) Ĕçекен шыва аванлатассипе шыв тухакан вырăнсене саниттари йĕркине кӳртесси.

2) Çурт-йĕре саниттари йĕркипе усрасси.

3) Апат-çимĕçе саниттари йĕркипе усрасси.

4) Сикекен ђирсемпе кĕрешесси.

5) Пурăнăç çитменлĕхĕ пирки пулакан ђирсене (сотсиал ђирсене) пĕтерес йĕркепе ĕçлесси.

6) Шкул ађисен сывлăхне сыхласси.

7) Ађа амăшепе ађан сывлăхне сыхласси.

8) Ĕç вырăнсене санитари йенђен йĕркелесси.

9) Халăха санитари йенђен çутатасси.

10) Емеллес ĕçпе санитари йĕркине йусасси.

3. Иккĕмĕш пунктра кăтартнинђен пуçне вулăсри сывлăх канашĕсен ĕçĕсем тата ак çаксем:

1) Йалсенђе халăха емеллес ĕçĕн çитменлĕхĕсемпе санитари çитменлĕхĕсене кăтартса парса, вĕсене те тата тĕрлĕ ђир-ђĕрсене те пĕтерме çул шырасси.

2) Пуљнитсасене йышлăлатас йĕркепе ĕçлессипе вĕсене пулăшса тăрасси.

3) Халăха санитари ыйтăвĕсемпе паллаштарасси.

4) Сикекен ђирсенђен сыхланмалли йĕркесемпе халăха паллаштарасси?

5) Йалсенђи сывлăх комиççисене пĕрлештерсе тăрса, вĕсен ĕçне йиертсе пырасси.

6) Йалсенђе çĕнĕ çуртсене санитгари кăтартнă пек тăвас ĕçе пулăшасси.

4. Вулăсри сывлăх канашĕн ђленсене çаксен кĕмелле: вулĕçтăвком ђленсенђен пĕри, хĕрарăм пайĕнђен, комсомолтан, пулăшу комиттетĕнђен, копператси йĕркипе ĕçлекенсенђен, йал канашсенђен, профсоветран, тата уйесри санитари тухтăрĕпе вулăсри тухтăр.

5. Вулăсри сывлăх канашĕсен çакăн пек комиççисем пулмалла:

1) Ађа амăшĕпе ађа сывлăхне сыхлас ĕç çинђе тăракан комиççи. Çак комиççине пĕрер çын вулĕçтăвкомран, хĕрарăм пайĕнђен, комсомолтан, копператси йĕркипе ĕçлекенсенђен, çывăхри тухтăрпа аккушеркă, тата халăх сутĕнђен кĕреççĕ. Ађа амăшĕпе ађа сывлăхне сыхлас ĕç çинђе тăракан комиççи консуљтатсисемпе йаçлĕсем туса халăха пулăшас йĕркепе ĕçлемелле; тата йалти хĕрарăмсене вĕрентес ĕçе, тăлăх арăмсене пулăшас ĕçе йусамалла.

2) Шкул ађисемпе çитĕнеймен ађасен сывлăхне сыхлас ĕç çинђе тăракан комиççи.

Ку комиççине вулĕçтăвкомран пĕр çын кĕрет, тата уйесри саниттари тухтăрĕпе çывăхри тухтăр, уђитлĕсенђен, çитĕнеймен ађасене пăхакан уђитлĕсенђен, комсомолтан, пионер йĕрĕпе ĕçлекенсенђен, тата çĕр ĕçĕпе вăрман ĕçин профсоветĕнђен пĕрер çын кереççĕ.

Çак комиççин шкул ађисене тухтăра тăтăшрах кăтартса тăрса, вĕсен сывлăхне сыхлас ĕçе йусамалла, ађасен хушшĕнђе спорт ĕçне çирĕплетмелле, ађасен уђрешђенисенђе сывлăх комиççисем тумалла, шкулсенђе ађасене ирсерен вĕри апат пама тăрăшмалла.

6. Вулăсри сывлăх канашин преçитиумĕнђе виçĕ çын пулмалла: претçетаттĕл (ку вулĕçтăвком ђленĕсенђен пĕри), претçетаттĕл йулташĕ (йалти пĕрлешӳсенђен), çыруçă (сывлăх канашне кĕнĕ тухтăрсенђен пĕри).

7. Вулăсри сывлăх канашĕ сывлăх комиссариађĕ катартнипе ĕçлет, икĕ уйăхра пĕрре ђленсене пухса ĕç тăват, ларăвĕнђе çырнă проттоккол укерђĕкне çирĕплетме уйесри сывлăх пайне йарать, теприне вулĕçтăвкома парать.

## II. Йалсенҁи сывлăх комиҫҫисем ҫинҁен.

Халăх сывлăхне сыхлас ĕҫе ҫирĕплетес йĕркепе, тата ҫак ĕҫе йалти ҫынсене хăйсене йавăҫтарас тесе, кашни йал канашĕ ҫумĕнҁе сывлăх комиҫҫи пулмалла.

1. Йал сывлăх комиҫҫи ҫак ĕҫсене туса тăмалла:

1) Йалти пурăнакан ҫуртсене саниттари йеркипе тытасси.

2) Йалти суту-илӳ вырăнсене, апат-ҫимĕҫсене таса тытасси.

3) Халăх ҁирĕсемпе (ҁаххоткă, венер ҁирĕсем, халăх ĕҫке йерни, т. ы. те) кĕрешме ҫул шырасси.

4) Сикекен ҁирсемпе кĕрешме тĕрĕс ҫул тупса халăх сывлăхшĕн тăрăшасси.

5) Фискуљттур тенине ҫирĕплетесси.

6) Саниттари йенҁен ҫутатса халăха тасалăх ыйтăвĕсемпе паллаштарасси.

7) Халăха емеллес ĕҫе майлă пулăшасси.

2. Йал сывлăх комиҫҫисем мĕн тума пултарнине вулĕҫтăвком кăтартса парать:

1) Сывлăх комиҫҫи ҁленĕсем саниттари йĕркипе ĕҫленĕ ҁух кăнтăрла пурăнакан пӳрте,

тĕрлĕ уђрештенисене ĕç вăхăтĕнђех кĕме пултараççĕ, вĕсем мĕн тума пултарнине сывлăх комиссариађĕ, уђрештенисемпе килĕшӳ туса, тĕплĕрех кăтартса параť.

2) Сывлăх комиççи ђленĕсем саниттари йĕркипе тунă тĕрлĕ йышăнусене, ђирккуљарсене, кăтартусене, т. ы. те, ĕçе кӳртсе тăраççĕ, вĕсене пăсакансене сут умне тăратма пултараççĕ.

3) Йал сывлăх комиççине йал канашĕ пуçласа йараť.

4) Йал сывлăх комиççине йал канашĕнђен пĕри çывăхри тухтăр, тата йал çыннисенђен кĕреççĕ.

5) Сывлăх комиççи ђленсене йалне кура суйламалла: пысăк йалсенђе нумайрах, пĕђĕккисенђе—сахалтарах суйламалла, çапах та сывлăх комиççинђе 3 çынтан кайа пулмалла мар.

6) Ларăвĕнђе тунă йышăнусене (проттокколне) сывлăх комиççи вулĕçтăвкома çирĕплетме йараť.

7) Сывлăх комиççи уйăхра пĕр пухăнса ĕç тумалла.

8) Кашни йалтах пĕрер сывлăх комиççи пулмалла. Ытла пысăк йалсенђе, йе хапрăк-

савӑт пур ҫӗртре, сывлӑх комиҫҫи хӑйне пулӑшма санйаҌҌейккӑсем тума пултарать. СанйаҌҌейккӑсем сывлӑх комиҫҫи кӑтартнипе ӗҫлемелле.

Ҍ.А.С.С.Р. Сывлӑх комиссарӗ
(алпуснӑ)

Ҍ.А.С.С.Р Санпрофпайне йертсе пыракан
(алпуснӑ)

Хакĕ 25 пус